# "Вăйăсем" списокри вăйăсен йěрки

**Алă татмалла**

Çуллахи урамри вăйă. Вылякансем алла-аллăн тытăнса карта тăваççě. Малти çавăтса пырать. Пурте юрлаççě. Çавăтса пыраканě чи хыçалтин хул айěпе тухать те ăна картаран татса хăварать. Ыттисем икě рете уйрăлса хире-хирěç тăраççě. Ертсе пыраканни картаран кирек кама та тытса юлма пултарать. Юрланă чухне вăл çавăн ятне калать. Тěслěхрен: «Мишшан пылне-хуртне çимелле», — тесе юрлаççě. Мишша тухать. Умěнче тăраканě унăн аллисене хěреслесе тытать те карт-карт туртса сăвă калать:

Так-так Таяхвине, Пуяхвине,

Пуй, пуяшка-пуяшка,

Мěн вăрларăн, тевешке?

Чавка чйппи вăрларăн-и?

Çавăншăн çыхса лартрěç-и?

Вара татса илнě ачине рет витěр кăлараççě. Çакă ěнтě пылне-хуртне çини пулать. Вăрламан тесен тивмеççě, вăрларăм тесен вара — тěрткелеççě.

**Вăкăрла**

Арçын ачасен хěллехи вăййи. Чышкă пысăкăш шăннă пăр муклашки (вăкăр) тупаççě. Шăпа ярса вăкăр хуçине палăртаççě. Вăл урипе тапса вăкăра юр çийěн кустарать, ыттисене тивертме тăрăшать. Лешсем вăкăр хуçине çурăмěнчен çапма пултараççě, вăр-вартарах пулма хистеççě.

Пăр муклашки пěр-пěр ачине пырса лексен çавă вăкăр пулать, лешě ыттисемпе пěрле тарма тытăнать.

**Икерчě (Икерчě пěçермелпе)**

— Макçăм арăмě ăçта кайнă?

— Икерчě пěçерме кайнă пуль.

— Ун икерчи мěнле-ши?

— Ак çапла çӳллě пуль.

— Ак çапла лутра пуль.

— Ак çапла сарăлчăк пуль.

— Ак çапла пěрěнчěк пуль.

Çапла каланăçем ачасем хусканусем туса пыраççĕ. Юрлаççĕ. Юрри пĕр йышши хускану хыççăн теприне тума хушса пырать.

Кун пек вăйăсене кĕçĕн çулхи ачасем ушкăншарăн выляма пултараççĕ.

## Йоксла

Йоксла выляма 60—70 см тăршшĕ туя тата тăвата енлĕ 15— 20 см тăршшĕ патак кирлĕ. Ăна йокс теççĕ. Унăн пĕр енне «1», тепĕр енне «2», виççĕмĕш енне «3» хисепсем çырмалла.

Тăваттăмĕш енне «X» тесе паллă тумалла. Йоксăн икĕ пуçне те шĕвĕртмелле. Çĕр çине тăваткĕтеслĕх ӳкермелле, варрине йокс хумалла. Ку вăййа нумаййăн выляма пулать. Вăйă пуçлаканĕ вăрăм патаккипе йокса çӳлелле çапса хăпартать, сывлăшра ăна айккинелле питĕ хытă çапса ярать: Иккĕмĕш ачи йокс мĕнлерех ӳкнине кайса пăхать. «X» паллă çӳлелле курăнса выртать пулсан çапаканнин пĕр очко та пулмасть. Пĕр-пĕр хисеп (1, 2 е 3) курăнсан çавăн чухлĕ очко пулать. Вара йокса иккĕмĕш ачи ярса илсе тăваткĕтеслĕхе тĕллесе перет. Лектереймесен йокс кăтартакан очко малтанхи ачин пулать, лектерсен ку очкона хăйнех параççĕ. Леш ачин вара малтан илнĕ очкосем (йокс миçе очко кăтартнине кура) çунса каяççĕ. Ça-вăнпа ăна инçерех çапса яма тăрăшаççĕ.

## Кантăр вăрրилле

Çулла урамра кĕçĕн тата вăтам çулхи ачасем вылямалли вăйă. Ачасем алран алла тытăнса çаврашкана тăраççĕ. Варрине пĕр хĕрачине — «кинемейне» кăлараççĕ. Карталанса тăракансем хĕвеле май çаврăнма тытăнаççĕ, çаврашка варринчи кинемейпе юрласа калаçаççĕ:

— Кантăр вăрри, верусса, верусса, Эп — Верук, эс — Верук. Мĕн тăватăн, кинемей тус?

— Вутă çуратăп.

— Кантăр вăрри, верусса, верусса... Мĕн тăватăн, кинемей тус?

— Мунча хутатăп.

— Кантăр вăрри, верусса, верусса, Мĕн пулчĕ, кинемей тус?

— Сĕрĕм тивертрĕм.

— Кантăр вăрри, верусса, верусса, Мĕн пулчĕ, кинемей тус?

— Эй, карчăк вилнĕ!

Ҫак сӑмахсене каласан пурте кинемее йӑтса каяҫҫӗ, ӑна усал тесе чышаҫҫӗ. Лешӗ сиксе тӑрать те ачасене хӑвалама тытӑнать. Кама тытать, ҫавӑ кинемей пулать. Вӑйӑ малалла тӑсӑлать.

### Картари мечӗк

Ачасенчен пӗри (шӑпа ярса палӑртаҫҫӗ) мечӗк ҫӳретекен пулать. Ытти ачасем карталанса тӑраҫҫӗ. Мечӗк ҫӳретекенӗ варринче тӑрать. Юнашар тӑракан ачасем питӗ хӑвӑрт пӗрне-пӗри мечӗк параҫҫӗ. Варринчи ачин ҫав мечӗке туртса илме тӑрӑшмалла. Туртса илсен вӑл вӑйӑ картине тӑрать, мечӗксӗр тӑрса юлни ун вырӑнне йышӑнать.

### Касримушкӑлла

Тӗрлӗ ҫулхи ачасен тӗрлӗ вӑхӑтра вылямалли вӑйӑи.

Вӑйӑ пуҫланиччен Касримушкӑна тата ашшӗне суйлаҫҫӗ. Ыттисем аллисенчен тытса ҫаврашкана тӑраҫҫӗ, ҫаврашка варринче — ашшӗ. Ачасем ҫаврӑм тӑваҫҫӗ те ашшӗнчен: «Касримушка килте-и?» — тесе ыйтаҫҫӗ. Ашшӗ: «Ҫавӑнта (ҫывӑхри ял ятне калать) кайнӑ», — тесе хуравлать. Кун пек темиҫе хутчен те ҫаврӑнса калаҫса илеҫҫӗ. Юлашкинчен ашшӗ: «Килте», — тесе калать. Касримушка тарать, пурте ӑна хӑвалаҫҫӗ. Хӑваласа тытсан алли-уринчен тытса каялла йӑтса килеҫҫӗ. Ҫӗр ҫине хурсанах Касримушка сиксе тӑрса вылякансене хӑйсене хӑвалама пуҫлать. Кама хӑваласа тытать, ҫав Касримушка пулать.

Ашшӗне урӑххине суйлаҫҫӗ. Вӑйӑ тепӗр хут пуҫланать. Ачасем карталанса ҫаврӑннӑ чухне ҫак сӑмахсене каласа та юр-лаҫҫӗ:

Кос- кос- Костӑрма,

Костӑрмана каймалла,

Хора сурӑх илмелле,

Костромушка килте-и?

### Кӗтесле

Ҫулла пурара, хӗлле пӳртре выляҫҫӗ. Шӗвӗр япалапа йӗр туртса ҫерем ҫинче (е урайӗнче тӑват кӗтеслӗх туса) выляма юрать.

Пиллӗкӗн выляҫҫӗ. Тӑваттӑшӗ пӗрер кӗтесре тӑрать, пӗри — хуралта (варринче). Варринчи хушсан вылякансен харпӑр хӑй кӗтесӗсенчен тухса тепӗр кӗтес йышӑнмалла. Ҫав хушӑра варринче тӑраканӗ те вырӑн тупма тӑрӑшать. Кам кӗтессӗр юлать, вӑл — хуралҫӑ.

Кӗтес улӑштарма хушакан юрӑ:

Сик-сик, кĕтес, сик, кĕтес,

Сикмессерен — пĕр кĕтес.

Малти кĕтес, кайри кĕтес,

Сулахай кĕтес, сылтăм кĕтес —

Мана пуласси хăш кĕтес?

Сик, кĕтес!

Кĕт-кĕтес, кĕт-кĕтес!

Кĕтнĕ çиме Самарук!

Сик, кĕтес! Сик, кĕтес!

Шăпăрчăк чăрр!

Ак çапла та калаççĕ:

— Сик, куç! Сик, куç! Сик, кĕтес!

Кĕтесри:

— Улăшас! (Кĕтес улăштараççĕ.)

Е урăхла калаççĕ:

— Хваттер яратни?

Кĕтесри:

— Пушă мар, хăнасем пур. («Ĕне пăрулана», «Чирлĕ çь пур» т.ыт.те теме пулать.)

Хурал (тепĕр кĕтесе пырса):

— Хваттер яратни?

Кĕтесри:

— Яратăп.

Тата урăхла калама та май пур:

— Хваттер яратни?

— Ямастăп.

— Эсĕ яратни?

— Ямастăп.

— Эсĕ яратни?

— Ямастăп.

— Эсĕ яратни?

— Ямастăп.

— Эппин, ман качакана куртăн-и?

— Сан качаку ман картари купăстана çисе янă. Эпĕ ăна сутса ятăм.

— Апла пулсан тӳле укçа.

Кĕтесре тăраканни çӳлелле пĕр-пĕр япала ывăтать. Вăл ӳкиччен кĕтес улăштараççĕ. Çĕнĕрен юлнă хуралçă ӳкнĕ япала хуçине илсе парать те вăйă çĕнĕрен пуçланать.

Кун пек те калаçаççĕ:

— Кĕтес тарас?

— Ав (тепĕр кĕтеселле кăтартать).

— Кĕтес тарас?

— Улăшас!

**КПлла**

Ку вăййа çулла та, хĕлле те пӳртре ытларах пĕчĕккисем выляççĕ.

Малтанах картонран пысăках мар тăваткăлсем касса хатĕрлеççĕ. Пĕри çак тăваткăлсене тĕрлĕ çĕре пытарса тухать. Ыттисем ку вăхăтра пӳртрен тухаççĕ. Пытарса пĕтерсен ертсе пыраканни вĕсене чĕнсе илет те, лешсем шырама пуçлаççĕ. Кам миçе тăваткăл тупать, унăн çавăн чухлĕ очко пулать. Камăн очко нумайрах, çав çĕнтерет. Ку вăййа ывăнса çитиччен выляма пулать.

**Кушакпа шăшилле**

Уçă вырăн кирлĕ. Вылякансен шучĕ мăшăрлă пулмалла, нумай ача вылять. Вăйă вĕсене çивĕч пулма хистет.

Пысăк çаврашкана икшерĕн умлă-хыçлă тăрса тухаççĕ. Шăшипе кушакне суйлаççĕ. Вăйă пуçлансан шăшийĕ тарать, кушакĕ хăвалать. Шăши кам умне те пулин пырса тăрсан хыçалти, виççĕмĕшĕ, шăши пулать, кушакран тарма тытăнать.

Кушакĕ шăшие ярса тытсан шăшийĕ — кушак, кушакĕ шăши пулса тăрать те вăйă малалла тăсăлать.

Кушакăн та, шăшин те чупнă чух çаврашкана кĕме юрамасть.

**Мăкăнь акмалла**

Ку вăййа тата «Ака мĕнле тăваççĕ?», «Утă çулмалла», «Кантăр акмалла», «Купăста касмалла» вăйăсене вылянă чухне ачасем аяларах

çырса кăтартнă юрăсене юрлаççĕ. Юрланă май пĕр-пĕр ĕç тунă пек аллиурисемпе, пĕвĕсемпе (юрăра кăтартнă евĕрлĕ) тĕрлĕ хускану тăваççĕ. Вылякансем карталанса тăрса юрлаççĕ:

Мăкăнь акаççĕ ак çапла, ак çапла,

Шăтса тухать ак çапла, ак çапла,

Мăкăнь çитĕнет ак çапла, ак çапла,

Мăкăнь çурăлать ак çапла, ак çапла,

Пулса çитет ак çапла, ак çапла.

Мăкăнь силлеççĕ ак çапла, ак çапла,

Юхса тухать ак çапла, ак çапла,

Мăкăнь çиеççĕ ак çапла, ак çапла...

**Мулкачла**

Ачасем шăпа ярса сунарçă суйлаççĕ, хăйсем палăртнă вырăна пухăнса лараççĕ. Мулкачсем йăваран курăк çине тухаççĕ. Сунарçă вĕсене тытма хăтланать. Мулкачсем унран йăвинче кăна хăтăлма пултараççĕ. Пурне те тытса пĕтерсен кĕçĕнреххи сунарçă пулать, вăйă малалла тăсăлать.

**Пуйăсла**

Ку вăййа пушă вăхăтра урамра уçă сывлăшра, ытларах çулла выляççĕ.

Вăйăра темиçен те выляма пултараççĕ (10, 20—30 ача таранах). Выляма вĕрен е кантра кирлĕ.

Вылякансенчен иккĕшĕ хапха пулаççĕ: пĕр-пĕрне алăран тытса аллисене çӳлелле çĕклеççĕ, хапха пек виçкĕтеслĕх тăваççĕ, хапхи хупă чух аллисене çӳлелле çĕклемеççĕ. Ыттисем пуйăс тăваççĕ: пĕр-пĕрин хыçне пилĕкрен тытса тăраççĕ. Пуйăс ту-ту-у-ут! кăшкăртса, чух-чух-чух-чухлатса çаврăнса хапха умне пырать. Малта тăраканни, пуйăс хуçи, хапхаран алăк уçма ыйтать: «Алăка уçăр», — тет. Хапхисем: «Мĕн кирлĕ?» — теççĕ, Пуйăс хуçи: «Хĕре качча паратăп» е «Ывăла авлантаратăп», — тет. (Хыçалта кам тăнине пăхса.) «Кама качча паран?» е «Кама илсе паран?» — теççĕ хапхисем. «Сыснана е качакана», — тет пуйăс хуçи (çавăн пек кулăшларах пултăр тесе хуть кам ятне те калама юрать).

Хапха аллисене çĕклесе кĕртсе ярать, анчах та юлашкине аллисене антарса тытса юлать. Хапхисем хăйсем хушшинче шăппăн ят илеççĕ (сăмахран, пĕри — арбуз, тепри — хăяр). Вара тытса юлнă ачинчен: «Арбуз е хăяр?» — тесе ыйтаççĕ. Ачин суйласа илмелле. Енчен те арбуз терĕ пулсан вăл арбуз енне тăрать. Хăяр терĕ пулсан теприн енне тăрать. Çак хушăра пуйăс кăшкăртса кăшт аяккарах кайса килет, мĕншĕн тесен

вĕсен хапхара юлнă ача калаçнине илтмелле мар. Пуйăс ача пĕрин хыçне кайса тăнине курсан анчах тепĕр хут хапха умне пырать. Вăйă çапла малалла пырать. Ачасем хăшĕ арбуз, хăшĕ хăяр суйласа илнипе вылякансем икĕ ушкăна пайланаççĕ. Паллах, пĕринче нумайрах, тепринче сахалрах пулма та пулта-рать. Юлашкинчен вара çак икĕ ушкăн йĕр туртаççĕ те пĕр-пĕрне хирĕç тăрса вĕрен туртаççĕ. Хăш ушкăнĕ тепĕрне йĕр урлă туртса каçарать, çав çĕнтерет.

### Пулăсем

Çерем çине чĕрсе е юр çинче таптаса 10—15 м параллельлĕ йĕрсем тăваççĕ. Шăпа ярса пĕр ачана акула пулма суйлаççĕ. Ытти ачасем икке пайланса икĕ йĕр çине тăраççĕ. Тăрăр, чупăр тесенех ачасем пĕр енчен тепĕр енне чупса каçаççĕ. Акула вĕсене тытма тăрăшать. Тытнисем вăйăран тухса пыраççĕ. Миçе ачана тытсан акула е пулă пулнине те калаçса килĕшме пултараççĕ.

### Пушарла

Тĕрлĕ ӳсĕмри ачасем расна вăхăтра вылякан вăйă. Хĕлле — спорт пӳлĕмĕнче, çулла урамра иртет вăл. Пӳлĕмре чухне кăшăлсем (хулахуп) е пурă, çулла йĕр чĕрмелли патак кирлĕ пулаççĕ.

Малтан шăпа ярса ертсе пыраканнине суйлаççĕ. Вылякансем ункăсем ăшне (е йĕр туса палăртнă вырăна) кĕрсе тăраççĕ. Ертсе пыраканĕ (унăн ункă е вырăн çук) ыттисене хăй патне чĕнсе илет те пушар пирки каласа пама пуçлать: унран епле сыхланмаллине вĕрентет, мĕн-мĕн тума юраманнине ăнлантарать. Итлекенсен питĕ тимлĕ пулмалла, мĕншĕн тесен ертӳçи кирек хăш самантра та хăй калавне чарса: «Пушар!» — тесе кăшкăрма пултарать. Ун чухне пурте хăйсен ункине тăма васкаççĕ (пӳрчĕсене пушартан çăлаççĕ), ертсе пыраканĕ те ыттисенчен маларах пĕр пӳртне йышăнма васкать. Çапла майпа вылякансенчен пĕри çуртсăр юлать, вара ертӳçĕ пулать. Вăл каллех ачасене хăй патне чĕнет, пушар пирки, епле майпа çуртсăр юлни çинчен каласа парать, асăрханаллă та тимлĕ пул-маллине палăртать, калаçу хĕрсе пынă вăхăтра каллех «Пушар!» — тесе кăшкăрать, вăйă малалла тăсăлать.

### Пуштă çӳретекенле (Почтальонла)

Ачасем шăпа ярса пуштă çӳретекене (почтальона) суйлаççĕ, вăл ачасенчен пĕр 10—12 утăм аяккарах кайса тăрать.

Ачасем карталанса алăран алă тытăнса тăраççĕ. Пуштă çӳретекенни ачасем патне пырать те:

— Тук, тук, тук, уҫăр-ха, — тет.

— Кам унта?

— Пуштă.

— Ăҫтан?

— Хуларан.

Ачасем почтальона карта варрине кĕртеҫҫĕ.

— Мĕн тăваҫҫĕ унта? — ыйтаҫҫĕ вĕсем.

— Ĕҫлеҫҫĕ, вĕренеҫҫĕ, выляҫҫĕ, юрлаҫҫĕ... — тет почтальонĕ.

Ачасен пурин те ун хыҫҫăн ҫав сăмахсене каласа пымалла, ĕлкĕрейменни почтальон пулать.

**Резинкăлла**

Ку вăййа 2—6 ача выляма пултарать. Выляма 4—5 метр тăршшĕ резинка кирлĕ, икĕ вĕҫне хире-хирĕҫ ҫыхмалла. Виҫҫĕн выляҫҫĕ пулсан — виҫкĕтеслĕх, пиллĕкĕн пулсан ҫăлтăр пек туса резинкине чĕркуҫҫирен аяларах тытса тăраҫҫĕ. Пĕри паллă парсанах пурин те харăс сиксе резинкăран хăтăлмалла. Кам резинкăран хăтăлаймасть, ăна мĕн те пулин тума хушаҫҫĕ е шакки параҫҫĕ.

**Ҫăкăрла**

Вылякансенчен пĕри — хуҫи, тепри — кушакки, ытти ачасем — ҫăкăрĕсем. Хуҫи кушакне сĕт ярса парать, кăмакаран тин кăларнă ҫăкăрсене йĕркипе хурса хăварать те шыв хĕррине кĕпе чӳхеме тухса каять. Ҫав хушăра кушакки сĕтне ĕҫсе пĕтерсе пĕр ҫăкăрне йăтса тарать. Хуҫи таврăнать те ҫăкăр ҫуккине курса юмăҫа каять: «Манăн ҫăкăр ҫухалчĕ», — тет. Лешĕ юмăҫ ярам пекки тăвать те калать: «Санăн пĕр ала йĕп, пĕр ала кăмрăк, пĕр ала кĕл илмелле те ҫул тăрăх тăкса пымалла, вара ҫăкăру хăех тупăнĕ», — тет. Хуҫи юмăҫ хушнă пек тăвать, хăй: «Мăни-мăни, мăни-мăни, мăни-мăни!» — тесе пырать. Ҫăкăрсем кушака хăвалама пуҫлаҫҫĕ, ăна тытса хăлхинчен кăшкăраҫҫĕ.

**Ҫăпаталла**

Ҫĕр ҫине чĕркуҫҫи ҫӳллĕш шалча ҫапса лартаҫҫĕ. Ун тавра ҫăпата хурса тухаҫҫĕ. Шăпа ярса пĕр ачине вĕсене хураллама тăратмалла. Ыттисен ҫăпатасене вăрлама тăрăшмалла.

Вăрласа пĕтерсен ҫăпатасене аяккалла ывăтса яраҫҫĕ, ăнăҫсăр хуралҫăн вĕсене пуҫтармалла, каллех хуралҫăрах юлмалла.

**Сăрăлла**

Вӑййа пысӑкрах ушкӑнпа выляма аван. Чӑн малтан вӑйӑ пуҫне суйлаҫҫӗ. Унтан вылякансенчен пӗрне ушкӑнтан 5—6 метр айккинерех кайса тӑратаҫҫӗ. Ыттисем пӗр рете лараҫҫӗ, вӗсене вӑйӑ пуҫӗ тӗрлӗ тӗс каласа тухать. Унтан айккине кайса тӑратнине чӗнсе илет те ӑна пӗр-пӗр тӗс калать. Ҫак тӗс камрине шыраса тупма тивет унӑн. Енчен те лешӗ тӗрӗс пӗлчӗ пулсан вӑйӑ пуҫӗ камра ҫав тӗс пулнӑ, ҫавӑн вырӑнне ларать. Ку вара шыраканӗ пулать, малтанхи шыравҫи — вӑйӑ пуҫӗ. Шыраканӗ 3 хутӗнче те тавҫӑрса илеймесен ӑна «айӑплаҫҫӗ» — юрлаттараҫҫӗ, ташлаттараҫҫӗ т.ыт.те.

**Сӑрӑлла**

Ҫулла тӗрлӗ ҫулхи ачасем вылякан вӑйӑ. Ача шучӗ 5—6-ран ытларах пулмалла.

Вылякансем пӗр йӗркене тӑраҫҫӗ. Пӗри вӗсен умне тухса ҫурӑмӗпе ҫаврӑнать. Ертсе пыраканӗ ачасене тӗс ячӗсене парса тухать: шурӑ, хура, кӑвак т.ыт.те. Вара малта тӑракан ачин-чен:

— Сана мӗнле тӗс кирлӗ? — тесе ыйтать.

— Хӗрли, — тет лешӗ (е урӑх тӗс калать).

Кама хӗрлӗ тӗс ятне панӑ, ҫавӑ ретрен тухать те малта тӑракан ача ҫумӗпе чупать. Лешӗ те ӑна тытас тесе сыхӑ тӑрать, хӑвалама пуҫлать. Хӑваласа тытсан тараканни каллех ҫурӑмпа ҫаврӑнса тӑрса тӗс ыйтма тытӑнать. Вӑйӑ малалла тӑсӑлать. Тытаймасан хӑвалаканни хӑй тӗс ыйтаканни пулса тӑрать.

Вӑйӑ пуҫланиччен ӑҫта ҫити чупса кайса килмеллине чикӗ туса палӑртаҫҫӗ.

**Сӑмах тупмалла**

Каннӑ чухне вылямалли вӑйӑ. Ачасем пӗр йӗр ҫине ларса тухнӑ. Вӗсен умне пӗр ача тухать те пӗр е икӗ утӑм маларах кайса тӑрать. Унта паллӑ тӑвать. Ун хыҫҫӑн хӑйне валли пӗр сӑмах шутлать. Ҫак сӑмаха кроссвордри пек сӑнласа парать. Мӗнле саспаллирен пуҫланнине те калать. Ачасем пӗри те тепри пӗрне-пӗри пӳлсе кӑшкӑраҫҫӗ. Кам та пулин тӗрӗсне каласан сӑмах туптараканни тарать. Пӗлнӗ ачи палӑртнӑ йӗр патне чупса пырать те: «Стоп!» тет. Лешӗ чупма чарӑнать. «Стоп» текенни хӑйсем хушшинче миҫе утӑм пулнине калать, ун хыҫҫӑн утӑмлать. Тӗрӗс пӗлнӗ пулсан хӑй туптараканни пулать. Пӗлмен пулсан хӑй вырӑнне кӗрсе ларать. Вӑйӑ ҫӗнӗрен малтанхи йӗркепе пуҫланать.

**Сӑмаварла**

Ку вӑййа тӗрлӗ ҫулхи ачасем расна вӑхӑтра выляҫҫӗ.

Вăйă пуçланиччен ертсе пыраканнине тата сăмаварне суйлаççĕ. Сăмавар ыттисен еннелле çурăмпа çаврăнса тăрать.

Ертсе пыраканни çав вăхăтра ачасене е хула, е чĕрчун, е чечек т. ыт. ячĕсене хурса тухать. Вара пĕр ачине çав вăрттăн ятпа чĕнет. Лешĕ сăмавар патне пырса ăна çурăмĕнчен тĕртет те хăй вырăнне кайса ларать. Сăмаварăн çав ача кам иккенне пĕлмелле. Пĕлсессĕн ун вырăнне тĕкекенни тухать, пĕлмесен хăех сăмавар пулса юлать.

Сăмаварăн хăйне кам тĕкнине вăрттăн пăхма юрамасть.

**Сăмса тутри пăрахмалла**

Ку вăййа выляма питĕ нумай çын кирлĕ. Вăйăри ачасем пурте çаврашкана кукленсе лараççĕ. Пĕри аллинче сăмса тутри тытса тул енчен чупса йĕри-тавра çаврăнса çӳрет. Чупса çӳренĕ хушăра систермесĕр пĕр ача хыçне тутăр пăрахса хăварать. Çак çын хай хыçне пăрахса хăварнине сисмерĕ пулсан пăрахса хăвараканĕ пĕр çаврăм тăвать те çав ача патне çитсен ун сăмса тутрине илсе малалла каять, унăн вара пĕр очко шутланать, енчен те виçĕ очкона çитсен «каччă шырама» каяççĕ. Çав сăмса тутри пăрахакан пӳрнисене каччă ячĕсене парса тухаççĕ, унтан вара çав ача патне пырса ăна çав пӳрнесенчен пĕрне суйлаттараççĕ. Вăл мĕн ятлине туртса кăларать, çавăн ятлă каччăпа çӳрет тесе витлеççĕ.

Ку вăйă ачасене питĕ тимлĕ те асăрхануллă пулма вĕрентет.

**Сик-сик кĕтесле**

Ку вăййа ытларах пура ăшĕнче выляма юратаççĕ. Пиллĕкĕн выляççĕ. Тăваттăшĕ пĕрер кĕтесе тăраççĕ, пĕри — варринче. Варринчи хушсан вылякансен харпăр хăй кĕтесĕнчен тухса тепĕр кĕтес йышăнмалла. Çав хушăра варринче тăраканĕ те вырăн тупма тăрăшать. Кам кĕтессĕр юлать, вăл хуралçă пулать.

Хуралçă кĕтесре тăракан патне пырать те ыйтать:

— Çăраççи уççи ăçта? — тет. Лешĕ: «Ав лере!» — тесе тепĕр кĕтесри патне тĕллесе кăтартать. Хуралçă унта пырать те:

— Çăраççи уççи ăçта? — тет. Ку татах теприн патне тĕллесе кăтартать. Унтан теприн патне, юлашкинчен тăваттăмĕш патне пырать те:

— Çăраççи уççи ăçта? — тет. Ку ачи:

— Пĕлĕтре! — тесе кăшкăрса ярать. Вара пурте пĕрле:

— Сик-сик, сик, кĕтес!

Сикмессерен пĕр кĕтес! —

тесе кăшкăраççĕ, вара кĕтес йышăнма (улшăнма) тăрăшаççĕ. Кам кĕтессĕр юлать, вăл хуралçă пулать.

**Сысналла**

Ку вăййа ытларах хĕлле пӳртре, çулла урамра выляççĕ. Выляма ача нумайрах пулсан интереслĕрех. Çак вăййа кашни ачан тутăр, пиншак е урăх тумтир (витĕнмелли) илсе тухмалла.

Вылякансенчен пĕри амăшĕ, тепри сысни, ыттисем — сысна çурисем. Сысни айккинерех кайса тăрать. Амăшĕ сысна çурисене вырттарать те çиелтен мĕн пур япалисемпе витсе хурать, унтан сыснине чĕнсе илет. Сысни ачасене хыпашлама пуçлать, кашни ачана тытса пăхать. «Ку — çавă», — тесе ачасен ятне калать. Тĕрĕс каласа тухсан ачасем (сысна çурисем) çиеле витнĕ япалисене илсе пăрахаççĕ. Пĕрне те тĕрĕс каламасан сысни çавах пулать. Тĕрĕс каласан кама паллană, çавсенчен пĕри сысни пулать. Амăшне те улăштараççĕ. Вăйă малалла тăсăлать. Витсе хунă чух сыснин хăш çури ăçта выртнине пăхмалла мар. Сысна çурисен хăйсене хыпашланă чух сасă памалла мар.

**Суккăр такалла**

Хĕллехи вăйă. Пӳртре 3—4 ача вылять. Пĕр пӳрнине хăрăмласа шăпа яраççĕ: кама хăрăмланă пӳрне лекет, вăл суккăр така пулать. Тутăрпа унăн куçĕсене хупласа çыхаççĕ те алăк патне пырса тăратаççĕ. Вăл алăк хăлăпне тытса сăвă калать:

Тан-тан, тан алăк,

Çытма йĕмлĕ ачасене

Тĕпелелле ан ирттер!

Çав хушăра ыттисем йăпшăнса тараççĕ. Суккăр таки вĕсене тытма тăрăшать. Кама тытса палласа илет, çавă суккăр така пулать.

Ку вăййа урăхла куркуçла, куç курмилле, куç мучилле, тӳн-тӳнле, тӳн-тӳн мучилле, суккăр такалла, суккăр мулкачла, суккăр упалла та теççĕ.

Суккăр упа пулаканни куçне çыхса урăхларах сăвă калать:

Упа тухрĕ вăранса

Çырла, măйăр пуçтарма,

Хуртсен пылне пуçтарма.

Хускалмасăр ан юлăр,

Атту эсир тытăнтăр! —

тет те шырама тытӑнать. Тытсан ҫапла калать:

Ак ун пылӗ,

Ак ҫырли,

Акӑ шӗшкӗ мӑйӑрри!

Тытнӑ ача кам иккенне алӑпа хыпашласа пӗлмелле.

**Ҫиччӗн пӗртӑван**

Ку вӑййа ачасем ушкӑнпа выляҫҫӗ. Юрланӑ чухне аллисемпе кӑтартса пыраҫҫӗ.

Эпир карчӑк патӗнче

Лутра пӳртре пурӑнатпӑр (лараҫҫӗ).

Эпир ҫиччӗн пӗртӑван.

Ак ҫакӑн пек куҫлӑ

(аллисемпе куҫсем туса кӑтартаҫҫӗ).

Ак сакӑн пек пуҫлӑ

(аллисемпе туса катартаҫҫӗ).

Вылятпӑр та кулатпӑр.

Пурте ҫапла тӑватпӑр (тӑпӑр-тӑпӑр туса илеҫҫӗ).

**Тӑрналла**

Ҫулла ушкӑнпа вылямалли вӑйӑ.

Вылякансем: хуралҫӑ, тӑрна, чӗпписем.

Тӑрнапа чӗпписем пӑрҫа ани ҫине вӗҫсе килеҫҫӗ те ҫиме, таптама тытӑнаҫҫӗ. Хуралҫи пӗрне хӑваласа тытать те килне илсе кайса хупать. Хӑй ҫывӑрса каять. Тытса хупнӑ тӑрна чӗппи патне ыттисем вӗҫсе пыраҫҫӗ. Хурланса ҫапла юрлаҫҫӗ:

— Тӑрна аппа, тӑрна аппа!

Аннӳ килнӗ, мантӑн-и?

— Манассине манман та,

Пӑрҫа ҫинче тытрӗҫӗ,

Хурӑн вутти хутрӗҫӗ,

Хӑрах ҫуната вӗтрӗҫӗ,

Тирӗк айне хупрӗҫӗ.

Тӑрнасем каллех пӑрҫа ҫине вӗҫсе каяҫҫӗ, хуралҫи каллех пӗрне тытса хупса лартать. Кайӑксем вӗҫсе пырса ҫав юррах юрлаҫҫӗ.

## Тимĕрçле

Арçын ачасем ку вăййа выртмара вылянă. Шăпа ярса палăртнă хыççăн пĕр ачи çĕре ларать, аллинче унăн нăхта е вĕрен. Çав нăхта е вĕрен вĕçĕнчен тепĕр ачи ярса тытать те лараканни тавра чупса çӳреме пикенет.

Лараканнинe юпа теççĕ. Чупса çӳрекенни — тимĕрçĕ. Ытти ачасем тимĕрçĕ сисиччен ăна çурăмĕнчен çапма тăрăшаççĕ. «Çăраççи, пуртă, суха тимĕрĕ тутарма килтĕмĕр», — теççĕ хăйсем. Тимĕрçи хăйне çапаканнине тытма тăрăшать, кама тытать, çавăнпа вырăнĕпе ылмашăнать.

## Тинĕс хумханать

Вылякансем 7-рен пуçласа 30 ачана çитиччен пулма пултараççĕ. Вăйă валли тӳрем вырăн суйласа илмелле. Вылякансем алран алла тытăнса пысăк карта тăваççĕ. Кунсăр пуçне кашни ачиех йĕр туртса çав карта тулашĕнче хăйне валли пĕчĕкункă ӳкерет. Пĕрин кăна (хуралçин) ун пек çаврашка пулмасть.

Шăпа ярса палăртнă хуралçă карта тулашĕнче çӳрет. «Тинĕс хумханать, тинĕс хумханать», — текелесе кама та пулин çурăмĕнчен пырса тĕртет. Хăй малаллах утать, çапнă ачи хăй вырăнĕнчен тухса ун хыççăн пырать. Хуралçă çапла мĕнпур ачине хăй хыççăн ертсе каять, утнă май тĕрлĕ хускану тăвать, ыттисем те ун пекех хуçкаланаççĕ (хăвăрт е вăрах утаççĕ, вĕçнĕ пек туса аллисемпе сулкалаççĕ, кукленсе лараççĕ т.ыт.те).

Сасартăк хуралçă: «Тинĕс лăпкă», — тесе камăн та пулин çĕр çинче чĕрсе тунă ункине йышăнма ыткăнать, ыттисем те çапла тума васкаççĕ, анчах та вырăн кашнинех çитмест. Кам вырăнсăр юлнă, вăл хуралçă пулать

## Тутăра туп

Вăййа пӳртре вăтам çулхи ачасем выляççĕ. Вылямa 2—3 ача кирлĕ.

Вылякансем ертсе пыраканни еннелле çурăмпа çаврăнса тăраççĕ. Çав вăхăтра вăл пĕр-пĕр япала пытарать. Ертсе пыраканни пулчĕ тесе каласан ыттисем шырама пуçлаççĕ. Вĕсене ертсе пыраканни те пулăшать. Вăл ăшă тесен — япала аякра маррине, вĕри тесен — çывăххине, кăварлă тесен пытарнă япала патнех çитнине пĕлтерет. Япалана кам тупать, çав ертсе пыраканни пулать.

Япалана пытарнă чух вылякансен вăрттăн пăхма юрамасть.

## Тӳмелле

Вăййа урамра та, пӳртре те, физкультура урокĕсенче те выляма пулать. Урайĕнче пĕчĕк чашăк е курупка пулмалла. Урамра чухне çĕр çине пĕчĕк шăтăк тумалла. Кашни выляканăн тĕрлĕ тĕслĕ тӳме пулмалла. Йĕр туртса паллă тумашкăн патак е пурă кирлĕ пулать. Пурте шăтăкран пĕр пек хушă хăварса çаврашкана чĕркуççисем çине ларса тухаççĕ. Шăтăкран пĕр пек виçе-ре йĕрсем тăваççĕ. Пĕри — чи çывăххи, виççĕмĕшĕ — чи аякри. Малтан пĕрремĕш йĕртен пĕр ачин тӳмене чашăка лектермелле. Пĕрре персе лектерсенех вăл иккĕмĕш йĕртен ывăтать, кайран — виççĕмĕшĕнчен. Лектереймесен ача пĕр рет каялла куçать. Çĕнтерекенни пĕр очко илет. Çапла майпа ыттисем те тӳмене чашăка кĕртме тăрăшаççĕ. Юлашкинчен çĕнтерӳçĕсене, япăх вылякансене палăртаççĕ.

Ку вăйă тĕл пеме вĕрентет, тимлĕ, чăтăмлă пулма хăнăхтарать.

### Тӳн-тӳн карчăк

Ку вăййа пĕр-пĕр пӳртре е пурара выляççĕ.

Пĕр ачи хăй ирĕкĕпе е шăпа ярса тӳн-тӳн карчăк пулать. Унăн куçне тутăрпа çыхаççĕ. Тӳн-тӳн карчăкăн ачасене тытмалла. Ачасем унран тараççĕ, тӳн-тӳн карчăк тесе йĕкĕлтеççĕ. Вăл кама тытать, лешĕ тӳн-тӳн карчăк пулать. Вăййа малалла та çавăн пекех выляççĕ.

### Ункăра пытанмалла вылясси

Шăпа ярса шыракана суйлаççĕ те унăн куçне тутăрпа çыхаççĕ. Ыттисем пысăках мар ункăсем (çаврашкасем) туса тăраççĕ. Ункăсен хушшисем ирĕклĕ.

Куçне хупнă шыраканĕ хуллен çеç ункăра тăракан ачасем патне пырать. Çав хушăра ачасем вырăнĕсемпе ылмашăнаççĕ. Анчах та шыраканĕ питĕ тачă çывхарсан пытаннисен пĕрин те ункăран тухмалла мар, çӳреме е ылмашăнма та юрамасть. Шы-раканĕ аллине малалла тăсса пырать. Унăн аллине лекес мар тесе пĕшкĕнсе, кăшт хуçланса е пăрăнса тарма та юрать. Кама та пулин тытсан, унăн ятне тĕрĕс каласан ачасем пурте пĕрле алă çупаççĕ. Шыраканĕ вăййа малалла тăсать: кама палланă, çавă шыраканĕ пулать.

Вăйă ачасен тимлĕхне аталантарать.

### Хăтармалла

Ку çуллахи е хĕллехи вăйă. 5—8 ача вылять. Вăйă ачасене çивĕч те вăйлă пулма пулăшать.

Малтан шăпа ярса вăййа ертсе пыраканне суйлаççĕ. Вăйă пуçлаканĕ аллине малалла тăсса ал тупанне аялалла туса тытать. Аллине

тăсаканни сăвă калать, вара аллисене хăвăрт кăна хутлатса ыттисен пӳрнисене тытма тăрăшать. Лешсен пӳрнисене тыттармалла мар. Камсен пӳрнисем тытăнаççĕ, çавсем хăвалаканнисем, ыттисем тараканнисем пулаççĕ.

Кама хăваласа тытаççĕ, çав пĕр вырăнтах тăрать. Ăна ыттисен алăпа тĕкĕнсе хăтармалла, хăвалаканнисен вĕсене чарма тăрăшмалла, тытнисем патне ямалла мар.

Пурне те тытса пĕтерсен вăйă вĕçленет. Тепĕр хут выляма каллех шăпа ямалла.

**Чĕмсĕрле**

Ку вăййа ушкăнпа выляççĕ.

Вăййа ертсе пыраканĕ ăсра вуннă таран шутлать. Çав вăхăтра вылякан ачасем сикеççĕ, тĕрлĕ хусканусем тăваççĕ. Ертсе пыраканĕ шутласа пĕтерет те: «Чарăнăр!» — тесе кăшкăрать. Ачасен вара çав вăхăтра кам мĕнле тăнă, çавăн пек хускалмасăр тăмалла. Хускалсассăн вăйăран тухса ӳкетĕн. Ертсе пыраканĕн шыв сыпнă пек тăракан ачасене култармалла. Чăтса тăрайманнисем вăйăран тухса ӳкеççĕ. Кам чи кая юлать, вăл ертсе пырать. Çапла вăйă малалла тăсăлать.

**Чушкăлла**

Çулла 3—6 ача вылямалли вăйă. Ытларах çерем çинче е урамра выляççĕ. Шĕвĕр япалапа çĕр çине пĕр тăваткал (енĕ — 50 см) чĕреççĕ, чăн варрине пĕр пĕчĕк лакăм тăваççĕ те ун çине шит тăршшĕ патак (чушка) хураççĕ. Унсăр пуçне кашни вылякан 60—80 см тăршшĕ патак пур, хăшĕ-пĕри ăна илемлетсе тăвать. Вăйă пуçлаканнине шăпа ярса е шугласа палăртаççĕ. Кая юлаканĕ «ухмаххи» пулать. Вăйă пуçлаканĕ лакăм çинче выртакан чушкăна хăйĕн патакĕпе çĕклесе илет те хыттăн айккинелле çапса ярать. «Ухмаххи» хăвăрт чупса кайса çав чушкăна илсе таврăнать, 3 метртан тăваткал ăшне перет. Чушки тăваткала кĕрсе ӳксен хайхи «ухмаххи» çапаканни пулать, тепри «ухмаха» юлать.

Анчах та çапса янă чушкăна «ухмаххи» сывлăшрах ярса тытсан вăл тӳрех çапаканни вырăнне йышăнать, лешĕ чушкă хыççăн чупаканни пулать.

**Шăши-мăшилле**

Ку вăййа пăрçа çинĕ чухне выляççĕ. Икĕ ача выляма пултараççĕ.

Пĕр ачи теприне кăтартмасăр аллине темиçе пăрçа илет те малалла тăсса лешĕнчен ыйтать: «Кунта шăши-мăши миçе?» — тет. Тепри, тĕслĕхрен: «Çиччĕ», — тет.

Ыйтаканни пăрçине шутлать, унта чăнах та çичĕ пăрçа пулсан хăй çимесĕр теприне парать. Пĕлмесен пăрçине хăех çисе ярать. Вара каллех лешне ыйту парать. Пĕлсен тепри ыйтма пуçлать.